27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
АПРЕЛЬ
21
ЭРНЕКУН
79 (6574) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕнче

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ республикăра çĕрулми тухăçне ӳстермелли мерăсене пăхса тухнă. Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕ çакна палăртнă: çĕрулми лартса тăвас тĕлĕшпе агротехника ĕçĕсене лайăх тăвас пулман пирки, çĕрулми тухăçĕ [illegible]. 1943 çулта çĕрулми [illegible] Улатăр, Куславкка, Комсомольски, Канаш, Первомайски, Пăрачкав, Сĕнтĕрвăрри, [illegible] районĕсенчи колхозсене начар пулнă. Çав районсенчи райисполкомсем, ВКП(б) райкомĕсем тата çĕрĕç органĕсем çак пиртĕ те пахи апат-çимĕç культурине лартса ӳстерес çине сахалтарах çаварăнса пăхса пулнă.

Çав районсенех пĕрех Вăрмар, Шупашкар, Етĕрне, Сĕнтĕр, Ишлей тата ытти районсенчи колхозсем пысăк тухăçлă çĕрулми ӳстереççĕ. Çапла, акă, Шупашкар районĕнчи «Молния», «Красный флот», «Знамя революции», Молотов ячĕллĕ [illegible] колхозсем, Сĕнтĕр районĕнчи «Çĕнĕ Юнкă», «Комбайн», «Ударник» колхозсем çулсерен кашни гектартан 150—180 центнер çĕрулми кăлараççĕ.

Чăваш АССР-ĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ çакна йышăннă:

1. Райисполкомсен, ВКП(б) райкомĕсен тата çĕрĕç органĕсен 1944 çулта кашни районра çĕрулми лартмалли плана çĕр процентпех пурнăçламалла.

2. Райисполком председателĕсен, ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсен тата райçĕрĕç пайĕсен заведующийĕсен колхозсенче çĕрулми вăрлăхне çителĕклĕ хатĕрлеттермелле. Çакна тумашкăн çĕрулми вăрлăхне колхозниксенчен сутăн е кивçен илес ĕçе организацилемелле. Мĕнпур колхозсенче тата колхозниксен хуçалăхĕсенче çĕрулми тăррине касмалла. Çакăнта [illegible] çĕрулми вăрлăхĕ ситмен колхозсене çĕрулми [illegible] касса лартса, [illegible] усă курас ĕçе организацилемелле.

3. Наркомземăн, райисполкомсен тата ВКП(б) райкомĕсен 1944 çулта çĕрулми тухăçне ӳстермешкĕн çак ĕçсене тумалла:

а) çĕрулми лартма пусçавăрăннăшĕнчи [illegible] çемçетнĕ çĕрсене (сăмахран, кĕрхи тырăсем вырăнне) çĕрулми лартмалла;

б) кĕрхи çĕртме тунă çĕрсене çуркунне иртерех 1—2 йĕр сӳрелемелле, культиваци тумалла та 10—12 сантиметр тарăнăш сухаламалла, ун хыççăн вара сӳрелемелле; кĕрхи çĕртме туман çĕрсене çуркунне иртерех 20—22 сантиметр тарăнăш сухаламалла та 1—2 йĕр сӳрелемелле;

в) çĕрулми лартмалли çĕр çине кашни гектар пуçне 30—40 тоннăран кая мар тислĕк, 5—10 центнер кĕл сапаласа пăрахмалла;

г) çĕрулми лартас умĕн ăна пысăкăшĕпе сорчĕ тăрăх уйăрса хумалла, чирлĕ çĕрулмине лартмалла мар;

д) çĕрулмине агротехника кăтартнă срокĕсенче, плугпа лартмалла, [illegible] ретсем хушши 35—45 сантиметр пулмалла;

е) çу вăхăтĕнче çумкурăксене 3—4 хутран кая мар çумлаламалла тата тĕмĕсене купаламалла. Çак ĕçе трактор тата лаша туптакан культиваторсемпе, окучниксемпе туллин усă курмалла. [illegible];

ж) çĕрулми лартнă вырăнсене çумкурăк тухнă май 1—2 йĕр сӳрелемелле;

з) [illegible] пĕр гектар çине 40—45 пин тĕмрен кая пулмалла мар. [illegible] 150—300 тăватăл метр пысăкăш питомник тумалла;

и) колхозсене пурнĕчен ытла «Лорх» ятлă сорт лартмалла, [illegible] пур районсенче—«Вольтман» сорт лартмалла. [illegible] «Эпикур» ятлă сорт, [illegible] «Ранняя роза» ятлă сорт лартмалла. Вĕтĕ тĕмсем лартмалла мар.

4. Райсовет исполкомĕсен председателĕсен, ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсен, райçĕрĕç пайĕсен заведующийĕсен тата колхозсен председателĕсен [illegible]. Сортлă çĕрулмине [illegible] вăрлăх участокне лартмалла. [illegible] кашни колхозра Лысенко академик кăтартнă майпа лартмалла та çав участоксенчен кăларнă çĕрулмине 1945 çулта вăрлăха сыхласа хăвармалла.

5. Çĕрулми лартса ӳстерес ĕçре [illegible] кашни колхозра [illegible] çĕрулми лартмалли участоксене [illegible].

Колхозсене çĕрулмине пăхас ĕçре [illegible] сĕнĕнĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ мĕнпур совет, парти, çĕрĕç органĕсене çĕрулми лартас тĕлĕшпе йышăннă агротехника ĕçĕсене пĕр пăркаланмасăр туса пыма хушнă.

Май уявĕ умĕнхи ăмăрту

Планран ирттерсе продукци кăларатпăр

ЙĔПРЕÇ. Пирĕн «Красный строитель» промартель Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче хăйĕн ĕçне лайăхлатса пычĕ. Çĕршыва фронта продукци туса парассине ӳстертĕмĕр. 1944 çулхи пĕрремĕш кварталта пĕтĕм продукци кăлармалли плана 130,8 процент, куллен кирлĕ таварсем кăлармалли плана 178,2 процент пурнăçланă. Çапла вара 1-мĕш кварталта планран ирттерсе 20 пин тенкĕлĕх продукци кăларнă.

Эпир мĕнле майпа ĕçлесе планран ирттерсе продукци кăларатпăр-ха? Чи малтанах ĕç дисциплинине çирĕплетрĕмĕр. Ĕçлекенсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ятăмăр, кашни рабочипе работница куллен мĕнле ĕçленине тĕрĕслесех тăратпăр. Ĕçре палăракан рабочисене пурте пĕлсе тăмалла турăмăр.

Эпир, вăрçăн йывăр условийĕсене пăхмасăр, кăçал спичка тата обозсем тăвакан цехсем организацилерĕмĕр. Çавăн пекех ялхуçалăхĕнче кирлĕ япаласем туса кăларассине те лайăхлатрăмăр. Колхозсене транспорт инвентарĕсем туса паратпăр. Ку тĕлĕшпе «Красный водник» колхозра мастерской уçрăмăр. Мастерскойра колхозсем валли транспорт инвентарĕсем тăваççĕ.

Халĕ пирĕн артельте çичĕ цех ĕçлет. Çак цехсенчен иртнĕ çулта тăмран чашăк-тирĕк тăвакан цех кăна плана пурнăçласа пынă пулсан, кăçал вара пур цехсем те уйăхри задание ытлашшипех тултараççĕ.

Мухтавлă Хĕрлĕ Çарăн фронтри чаплă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, пирĕн артельри рабочисемпе работницăсем фронтпа çĕршыв умĕнчи тивĕçе чыслăн пурнăçлас шухăш-кăмăлпа пурăнаççĕ, ĕç тухăçлăхне куллен-кун ӳстерсе пыраççĕ. Артельре ĕçлекенсен шутĕнчен 90 проценчĕ ĕç нормине 120 процентран пуçласа 300 процент таран пурнăçлаççĕ. Уйрăмах эпир тăмран чашăк-тирĕк тăвакан цехри рабочисен пархатарлă ĕçĕсемпе тивĕçлипех мухтанма пултаратпăр. Отечественнăй аслă вăрçă инваличĕ С. Фадеев, С. Акимов юлташсем тата 15 çулхи А. Кастихин нормăна икĕ хут ирттерсе тултараççĕ.

Артель коллективĕ, май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, апрель уйăхĕнчи плана 150 процент, çур çулхи производство планне майăн 15-мĕшĕ тĕлне пурнăçлама пулчĕ.

Хамăр çине илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçлатпăрах.

Д. МИХАЙЛОВ,
«Красный строитель» артель правленин председателĕ.

Хĕрлĕ ялавлă артельте

СĔНТĔРВĂРРИ. Астакассинчи «Лесоруб» артель март уйăхĕнче социализмлă ăмăртура мала тухса Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Çак награда çине коллектив малашне татах та вăйлăрах ĕçленипе ответлет.

— Тăван Хĕрлĕ Çар тăшмана аркатса, пĕр чарăнмасăр хĕвеланăçнелле улăпла утăмсемпе каять. Çак савăнăçлă кунсенче эпир ĕçлес хастарлăха нихăçанхинчен те ытларах ӳстерме тивĕçлĕ. Хĕрлĕ ялав пире татах та паттăртарах ĕçлеме чĕнет. Паллах, эпир малашне те пысăк тухăçлăн ĕçлетпĕр, Хĕрлĕ ялава хамăр аларан вĕçертмĕпĕр,—тет артель председателĕ Корнилов юлташ.

Артельти кашни рабочипе работница май уявĕ тĕлне апрельти производство планне 200 процент таран пурнăçлассишĕн кĕрешет. П. Федоров, А. Степанов, М. Варламов, К. Белов стахановецсем задание кашни кунах 250—300 процент пурнăçлаççĕ.

И. ТРИФОНОВ.

Вăйлă тырпулшăн кĕрешме Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва организацилер!

Çуракине кăтартуллăн ирттерер—вăйлă тухăçлă тырпул туса илер!

Калинин облаçĕнчи Краснохолмски районри „Красный путиловец“ ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсемпе колхозницисем Совет Союзĕнчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, трактористсемпе трактористкăсене, агрономсене

ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Хаклă юлташсем!

Фронтран питех те савăнăçлă хыпарсем килсе тăраççĕ. Тăван Хĕрлĕ Çар, совет çĕрне фашистла нимĕç захватчикĕсенчен тасатса, çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ тăвать. Хамăрăн ĕçпе фронтра çĕнтерӳллĕ наступлени тума, ылханлă тăшмана тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерсе тăкма пулăшмалла, — акă мĕнле пирĕн шухăш-кăмăл, акă мĕншĕн тăрăшатпăр эпир.

Сталин юлташ совет хресченĕсен пĕр хатарлă ĕçне пысăка хурса хакларĕ. Колхозлă ял фронта вăйлăн пулăшса тăниччĕ пирĕн ĕç те пур.

Пирĕн «Красный путиловец» колхоз иртнĕ çул районра пуринчен те тухăçлăрах тырпул туса илчĕ: кашни гектартан пĕрчĕллĕ тырăсем 16-шар центнер илнĕ, план тăрăх 13,5 центнер туса илмеллеччĕ, вăл шутра ыраш—21,7 центнер, урпа 18,5 центнер туса илнĕ. Эпир йĕтĕн сӳсĕ 6-шар центнер туса илтĕмĕр. Планпа 4-шар центнер туса илме палăртнăччĕ. Йĕтĕн вăрлăхĕ вара кашни гектартан 3,4 центнер пухса илес вырăнне 5,46 центнер пухса илтĕмĕр.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана — майракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 108,3 процент, сысначсем енĕпе 138,1 процент, сурăхсем енĕпе 109,6 процент пурнăçларăмăр. Кашни ĕнерен 1.470-шер литр сĕт суса илсе, плана 122,5 процент тултартăмăр. Кашни сысна аминчен 22-шер çурă çитĕнтертĕмĕр.

Колхоз государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли тата МТС ĕçĕшĕн натуроплата тӳлемелли обязательствăсене пурне те срокчен пурнăçа кĕртрĕ. Кунсăр пуçне государствăна 3.900 пăт тырă, 1.080 пăт çĕрулми сутнă. Хамăр облаçри колхозсене, нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнăскерсене, пулăшма 1.080 пăт тырă, 125 пуç выльăх панă.

Иртнĕ çул вăйлă тырпул туса илес енĕпе Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухнăшăн пирĕн облаçе Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне пачĕç. Вăйлă тырпул туса илнĕшĕн тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ӳстерес енĕпе лайăх ĕçленĕшĕн ĕçсынни депутачĕсен Калинин область Совечĕпе ВКП(б) Обкомĕ çав Хĕрлĕ Ялава сыхласа усрама пирĕн алла пачĕç.

Çураки умĕн пухăнса, эпир ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ ялхуçалăх ĕçĕсен 1944 çулхи планĕ çинчен йышăннă постановленине пур енлĕн те пăхса тухса тимлĕн сӳтсе яврăмăр. Çак постановлени пирĕншĕн те, мĕнпур колхоз хресченĕсемшĕн те, вăрçă вăхăтĕнчи вăйлă тырпулшăн кĕрешмелли боевой программа пулса тăрать.

Çак постановлени пире кашнинех фронтпа çĕршывшăн татах та ытларах вăй хурса, тăрăшса ĕçлеме хаваслантарать.

Тырпулсен тухăçлăхне пур майсемпе те ӳстермелле, пухса илекен тĕштырăсен тата ытти ялхуçалăх продукчĕсен пĕтĕм хисепне ӳстермелле—çак тĕп задачăна лартрĕç партипе правительство колхозсен умне.

Эпир çапла шутлатпăр: кăçал кашни колхозах, хăйĕн мĕнпур вăйĕсемпе, майĕсемпе усă курса çине тăрса ĕçлесен, тырпул ытларах туса илме пултарать.

Фронта пур майсемпе те пулăшса тăрассине вăйлатас тĕметпе, пĕр кăмăллă пухса, эпир сире, хаклă юлташсем, çакăн пек чĕнсе калама шутларăмăр: этьăр-ха çуракине питех те лайăх ирттерессишĕн, вăрçă вăхăтĕнче вăйлă тырпул туса илессишĕн мĕнпур колхозсен, бригадăсен, звеносен, мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсен социализмлă ăмăртуне сарса ярар.

Пирĕн обязательствăсем çакăн пек:

1. 1944 çулта пĕрчĕллĕ тырăсем кашни гектартан 20-шер центнер, йĕтĕн сӳсĕ 5-шер центнер, йĕтĕн вăрри 7-шер центнер, çĕрулми 170-шер центнер тата пахча-çимĕç 250-шар центнер туса илмелле.

2. Çуртыррисене йăлтах лайăх вăрлăхпа акса хăвармалла.

Çуртыррисем акса хăварма пирĕн лайăх вăрлăх çителĕклех. Акана тухас умĕн эпир вĕсем мĕнле шăтассине тепĕр хут тĕрĕслетпĕр, тулă, урпа, сĕлĕ тата йĕтĕн вăрлăхĕсене имçамсемпе вăхăтра чӳхесе хатĕрлетпĕр.

Çĕрулми вăрлăхĕ çителĕклех пулсан та, эпир 8 центнер çĕрулми тăрри вăрлăхлăх касса хатĕрлеме шутларăмăр, çавăн пекех, ирхи çĕрулми туса илес тесе, планран ирттерсе 2 гектар çине шăтса çеçкеленнĕ çĕрулми лартса хăваратпăр, июль уйăхĕнче ăна Хĕрлĕ Çар фондне пама шутлатпăр.

3. Уйхир ĕçĕсене пысăк пахалăхпа тумалла. Çуракине вăхăтра туса ирттересси тата 1944 çулта вăйлă тырпул туса илесси колхозсен Хĕрлĕ Çарпа халăха апат-çимĕç, промышленноçа—чĕр тавар парса тăрас ĕçри вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи питех те кирлĕ задачи пулса тăрать.

Партипе правительство уйхир ĕçĕсен агротехникине çителĕклĕ туса пынине тата тырпулсене пăхса тăрассине япăхлатнине сиенлĕ ĕç тесе шутларĕç. Агротехника ĕçĕсене çителĕклĕ туса пыни тата акнă тырпулсене пăхса тăрас ĕçе япăхлатни тырпул тухăçлăхне чакарасси патне тата уйхирсене çум пусса илесси патне илсе пырать.

Эпир кăçал уйхир ĕçĕсенче агротехника требованийĕсене çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пыма пулатпăр.

Мĕнпур культурăсене пусуçаврăнăшĕпе палăртнă уйхирсенче тĕрĕс вырнаçтарса тухатпăр. Кашни культурăна иртнĕ çул хăйшĕн паха культура акса тунă вырăна акса хăваратпăр: йĕтĕне йăлтах—клевер акса тунă вырăна, кĕрхи культурăсене — ирхи çĕртме тунă вырăна. Çурхи уйхир ĕçĕсене хăвăртрах пуçлас шутпа, уйхире улăмпа хăмăлтан, çумкурăксенчен тасататпăр. Сухаласса вара тарăн та шăйрăксемсĕр сухалатпăр. Сӳреленĕ хыççăнах культиваци тăватпăр тата акатпăр, пĕр ĕçе те кая хăвармастпăр.

Çурхи пучахлă тырăсене—11 ĕç кунĕнче, йĕтĕне—4 ĕç кунĕнче акса хăварма, çавăн пекех тата фермăсем патĕнчи участоксене те вăхăтра акса хăварма пулатпăр.

Эпир вăрлăх участокĕсем çинче вăйлă тухăçлă тырпул çитĕнтерессишĕн уйрăмах тимлĕн çаварăнса пăхатпăр.

Вăрлăх участокĕсене 100 процентлăх тырăсем акас умĕн лайăх хатĕрлесе çемçетнĕ çĕр çинче тăватпăр. Тырăсене акнă чухне тата акса хăварнă тырăсене пăхса ӳстернĕ вăхăтра агротехникăна çирĕппĕн пăхăнса пыратпăр, мĕнпур тырăсен калчисене лайăх пăхса усратпăр. Çуркунне кĕрхи тырăсене сӳрелетпĕр, ун хыççăн вара апатлантаратпăр тата çумлатпăр.

Çумкурăксене пĕтерессишĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешме пулатпăр: акнă тырăсене вăхăтра çумлатпăр, пропашной культурăсем акнă лаптăксенче ретсем хушшинче тумалли ĕçсене вăхăтра тăватпăр, йăрансемпе канавсенчи тата çул хĕррисенчи çумкурăксене чечеке ларичченех çулатпăр.

Уйхир ĕçĕсен пахалăхне тĕрĕслесе тăма опытлă колхозниксене явăçтаратпăр.

4. Вырăнти удобренисемпе туллин усă курмалла. Вĕсемсĕр çĕр çимĕç ытларах парассине ӳстерме пулмасть. Ахальтен мар «Тислĕке тăк ытларах—тырри пулĕ вăйлăрах» теççĕ.

Эпир хамăрăн хирсене 3.360 тонна тислĕк, 100 центнер кĕл, 50 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тăкатпăр.

Кашни гектар çине—тулă акмалли вырăна 25-шер тонна тислĕк, урпа акмалли вырăна 20-шер тонна, çĕрулми акмалли вырăна 28-шар тонна тата кĕрхи тырăсем акмалли вырăна 30-шар тонна тислĕк тăкатпăр. Йĕтĕн акмалли вырăна 7—8-шар центнер кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тăкатпăр.

5. Çуркуннехи уйхир ĕçĕсен вăхăтĕнче ĕçе тĕрĕс организацилетпĕр.

Çав шутпа бригадăсемпе звеносен составне тĕреклететпĕр, çĕрпе усă курас тĕлĕшри обезличкăна пĕтеретпĕр; çавăн пекех чĕрĕ туртăм вăйĕпе тата инвентарьпе усă курас ĕçри ответсăрлăха та пĕтеретпĕр. Ĕçшĕн кашнине уйрăм тӳлессине, ĕçе уйрăмăн шута илессине анлăн сарса яратпăр, кашни колхозник уйхирти мĕнпур ĕçсенче дисциплинăна пăхăнса ĕçлемелле тăватпăр.

6. Чĕрĕ туртăм вăйĕпе туллин усă курмалла. Лаша витинчи йĕркелĕхе çирĕппĕн пурнăçласа пыма пулатпăр, кантарма тăратнă лашасене вăйлăрах апат çитермелле тăватпăр. Çураки вăхăтĕнче çитерме лашасем валли кирлĕ чухлех утă, концентратсемпе ытти апатсем тупса паратпăр. Уйĕç бригадисенче мĕнпур лашасене шанчăклă колхозниксене çирĕплетсе паратпăр. Колхозăн кашни ĕç лаши —шанчăклă колхозник аллинче пултăр! Сухалас тата акас ĕçсенче лашасемпе ытларахăн усă курас тесе, пулăшуллă ĕçсенче, сӳрелес ĕçре тата уйхирти ытти ĕçсенче фермăсенчи сĕт сахал паракан ĕнесемпе тата колхозниксен ĕнисемпе туллин усă курма пулатпăр. Хире тухас умĕн лашасене кӳлсе çӳремелли инвентаре, йĕнерчĕк-сӳмсенсене тата ĕнесемпе вăкăрсене кӳлмелли хатĕрсене уйхир ĕçĕсене тума мĕнле хатĕрленине тепĕр хут тĕрĕслесе тухатпăр.

Колхозниксемпе колхозницăсем! Хамăрăн мĕнпур вăя çуракине ăнăçлăн ирттерсе, 1944 çулта, вăрçă вăхăтĕнче, вăйлă тырпул туса илес çĕре парар.

Трактористсемпе трактористкăсем! Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене тухăçлă ĕçлеттерĕр тата вĕсемпе туллин усă курăр.

Колхозсене çуракине хăвăрт та лайăх ирттерме пулăшăр.

Агрономсем! Уйхир ĕçĕсене пысăк пахалăхпа ирттермелле тăвăр! Трактор бригадисемпе уйĕç бригадисем çуртыррисене лайăх акса хăварас ĕçе организацилĕр.

Социализмлă ăмăртăва анлăн сарса, вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш çуракине кăтартуллăн ирттерер. Мĕнпур тырăсен тухăçлăхне вăйлăн ӳстерер.

Сывă пултăр пирĕн Аслă Тăван çĕршыв!

Сывă пултăр пирĕн çĕнтерӳллĕ Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр аслă çулпуçăмăр, учителĕмĕр тата колхоз хресченĕсен тусĕ — СТАЛИН юлташ!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Калинин облаçĕнчи Краснохолмски районри «Красный путиловец» ялхуçалăх артелĕн членĕсем хушнипе — колхоз председателĕ. **Н. А. Пылаева**, комсомол организацин секретарĕ **С. И. Костерева**, колхоз агрономĕ **Е. М. Мишина**, уйĕç бригадисен бригадирĕсем: **И. М. Шихалев, М. Н. Бахарева, Н. А. Лебедев, М. И. Вихрева**; Краснохолмски МТС трактор бригадин бригадирĕ **Г. А. Петров**; звеньевойсем: **А. Сентябрева, И. Н. Белякова, З. А. Комарова, А. Э. Антонова, М. И. Лебедова**; колхозниксем: **А. И. Ильин, М. И. Папина, А. М. Шихалев, Ф. И. Гагунова, А. Соснина, М. Г. Пресняков, В. А. Лебедева, А. И. Илларионов, Т. И. Рубанова, Н. А. Гущин, А. И. Нерсанов, М. Н. Вахрамеева**; фермăсен заведующийĕсем: **И. В. Степанов, В. И. Соснин, В. В. Громов, О. И. Нерсанова.**

Совет Информаци Бюровĕнчен

АПРЕЛĔН 18-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Апрелĕн 18-мĕшĕнче пирĕн çарсем СТАНИСЛАВ хулинчен хĕвелтухăçнерехре тăшманăн пехотипе танкĕсен атакисене сирсе-сирсе янă, тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳстернĕ.

СЕВАСТОПОЛЬ енче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, Крымри район центрне БАЛАКЛАВА хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса АЛСУ, КАМАРЫ, КАДЫКОВКА, КУЧУК-МУСКОМЬЯ, БАТИЛИМАН ялĕсене йышăннă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ.

Апрелĕн 17-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 21 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 36 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ КОНСТАНЦА ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛĔПЕ ТИНĔС ПОРТНЕ ЙЫШЛĂН ВĔÇСЕ КАЙСА ТАПĂННИ

Апрелĕн 18-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци, йышлăн вĕçсе кайса, Румынири **Констанца** чугун çул узелĕпе тинĕс портне тапăннă. Бомбăсем пăрахнине пула пушарсем нумай тухнă. Портра тата чугун çул узелĕнче темиçе вăйлă взрыв пулнă.

Пирĕн пĕр самолет хăйĕн аэродромне таврăнман.

АПРЕЛĔН 19-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Апрелĕн 19-мĕшĕнче СТАНИСЛАВ хулинчен хĕвелтухăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем тăшманпа вăйлăн çапăçнă, унăн йышлă пехотипе танкĕсен атакисене сирсе-сирсе янă.

КИШИНЕВ хули енче пирĕн çарсем ДНЕСТР шывĕн сылтăм хĕрринчи плацдармсене аслăлатасшăн çапăçнă, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

СЕВАСТОПОЛЬ хули енче пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, тăшмана хăйĕн оборонин вăйлă тĕреклетнĕ темиçе пунктĕнчен хĕссе кăларнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ.

Апрелĕн 18-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 17 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 78 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ЛЬВОВ ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛНЕ ЙЫШЛĂН ВĔÇСЕ КАЙСА ТАПĂННИ

Апрелĕн 19-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци **Львов** чугун çул узелне йышлăн вĕçсе кайса тапăннă тата тăшман çарĕсемпе техникине тиенĕ йышлă эшелонсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнине пула 10 тĕлте пушар тухнă, хĕспăшалпа çарсен эшелонĕсем тата горючи тултарнă цистернăсем çуннă. Пушарсем вăхăтĕнче вăйлă взрывсем пулнă. Пирĕн летчиксем каялла вĕçсе кайнă чухне çав пушарсен çутăмне 150 километртан курнă.

Пирĕн пĕр самолет хăйĕн аэродромне таврăнман.

* * *

Станислав хулинчен хĕвелтухăçнерехре тăшманăн йышлă пехотипе танкĕсем пирĕн позицисене атакăланă. Вăйлă çапăçу пуçланса кайнă. Халăх пурăнакан хăшпĕр пунктсем темиçе хутчен аларан алла куçнă. Пирĕн пехотинецсем, артиллеристсемпе минометчиксем пулăшса тăнипе, тăшманăн пур атакисене те сирсе янă, гитлеровецсене 2 батальона çити пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 12 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине, 4 бронетранспортерне тата 20 автомашинине персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

Летчик-истребительсен пĕр ушкăнĕ, Совет Союзĕн Геройĕ гварди майорĕ Ворожейкин ертсе пынипе, хамăр çарсен çапăçури ретĕсене хӳтĕлесе тăнă. Çав вăхăтра нимĕç бомбардировщикĕсемпе истребителĕсен пысăк ушкăнĕ вĕçсе пынă. Гварди майорĕ Ворожейкин, бомбардировщиксен вăйлă ушкăнĕ пуçĕнче пырса, бомбардировщиксене атакăланă, Лазарев лейтенант тăшманăн истребителĕсемпе çапăçма тытăннă. Пирĕн летчиксем 6 нимĕç самолетне персе ӳкернĕ. Кун каçиччен çав районра сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 13 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Кишинев хули енче пĕр соединени чаçĕсем Днестр шывĕн сылтăм хĕррийчи плацдармсене аслăлатасшăн çапăçнă. Тăшман вăйлăн хирĕç тăнине тата унăн контратакисене сирсе-сирсе ярса, пирĕн боецсем малалла куçнă та темиçе ял тытса илнĕ. Нимĕçсем хăйсен позицийĕсене каялла илме тăрăшнă пăчланса ларнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 800 вилли ытла выртса юлнă. Нимĕçсенчен хăй тĕллĕн çӳрекен 2 тупă; танксене пемелли 5 тупă, 20 пулемет, 6 миномет тата боеприпассен складне тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Севастополь хули енче пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă. Тинĕс хĕррине хĕстерсе лартнă тăшман çав тери хытă хирĕç тăрать. Совет артиллерийĕ нимĕçсен аллинче юлнă позицисене перет. Севастопольпе Симферополь хушшинчи шоссе çулĕн районĕнче гитлеровецсем кăнтăрла иртсен темиçе хут та контратака тунă, вĕсене авиаци пулăшса пынă. Совет чаçĕсем нимĕçсене хăйсен малтанхи позицийĕсем патне хăваласа янă, нумай çынна тыткăна илнĕ. Ытти участоксенче пирĕн штурмлакан отрядсем, хăйсене панă хир тупписемпе тата хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсемпе пĕрле кĕрешсе, çапла малалла куçса пыраççĕ, тăшманăн хирĕç тăмалли вырăнсенчен ирте-ирте каяççĕ те, татăклăн пыра-пыра çапса, вĕсене пĕтере-пĕтере лартаççĕ. Федюхины Высоты текен вырăншăн уйрăмах вăйлă çапăçусем пынă. Пирĕн боецсем çав паха позицисен флангне пырса тухнă та вĕсене татăклăн штурмласа тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн нумай вилли выртса юлнă. Пирĕн ытти чаçсем, ăнăçлă маневр туса, Сахарная Головка ятлă туран кăнтăр енĕпе иртсе кайнă. Çав ту вăл Инкерман улăхне каймалли çула пӳлсе тăнă. Пирĕн енпе каçнă салтаксемпе тыткăна лекнĕ салтаксем çапла каласа параççĕ: нимĕçсен командованийĕ хушнă тăрăх, оборонăра тăракан румынсене окопсенчен тухма чарнă. Румынсем çав окопсенчен тухма хăтлансанах вĕсене нимĕç автоматчикĕсем персе вĕлереççĕ.

* * *

Тăшман хăйĕн Крымри аркатса тăкнă группировкин чĕрĕ юлнă офицерĕсене Крымран тинĕс çулĕпе тата самолетсем çине лартса илсе кайма хăтланать. Совет авиацийĕ тăшманăн Севастополь

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра)

Совет Информаци Бюровĕнчен

АПРЕЛĔН 19-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

портпе тăракан карапсемпе баржăсене кăнтăрла та, çĕрле те пыра-пыра çапать. Портран тухма ĕлкĕрнĕ карапсемпе баржăсене тинĕсре хăваласа çитсе тапăнать. Çĕрле совет самолечĕсем пĕр ушкăн тăшманăн [illegible] çÿрекен 4 баржине тата пĕр катерне путарнă. Пирĕн самолетсен тепĕр ушкăнĕ тăшманăн 3.000 тонна таякан транспортне путарнă. Совет летчик-штурмовикĕсем Херсонес çывăхĕнчи аэродрома атакăланă та çĕр çинчи нимĕçсен 10 транспортлă самолетне çунтарса янă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери нимĕçсен 17 истребительне персе ÿкернĕ.

* * *

Хура тинĕс флочĕн авиацийĕ Севастопольпе Констанца хушшинче тăшман транспорчĕсене штурмланă, бомбăсем пăрахнă. Пирĕн летчиксем тăшманăн 4.000 тонна таякан транспортне тата хуралта çÿрекен катерне путарнă. Пĕр пысăк транспорта вут тивертсе янă. Кунсăр пуçне, нимĕçсен 5.000 тонна таякан [illegible] транспортне сиенленĕ.

Хура тинĕс флочĕн торпеда яракан катерĕсем Севастополь патне пымалли çулсенче кĕрешсе, çĕрле тăшманăн хуралта çÿрекен 4 катерне тата хăвăрт çÿрекен десант баржине путарнă. Пирĕн торпеда катерĕсем тăшманăн хăвăрт çÿрекен десант баржине шыва путарнă.

* * *

Барановичи облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕсем икĕ эрне хушшинче нимĕçсен темиçе [illegible] гарнизонне тата вырăнти [illegible] карательнăй ушкăнĕсене аркатса тăкнă. 400 гитлеровеца персе вĕлернĕ. Нимĕçсенчен 34 пулемет, 4 миномет, 330 винтовка, 70.000 патрон т. ыт. трофейсем тытса илнĕ. [illegible] партизанĕсем [illegible] тăшманăн чугун çул эшелонне тытса чарнă. Совет патриочĕсем пĕр паровоз, 20 вагон пĕтерсе тăкнă, 300 рельса ытла сирпĕтерсе янă. Çак участокра вара поездсем темиçе талăк хушши çÿремен.

* * *

Румынсен 2-мĕш горно-стрелковăй дивизийĕнчи йывăр минометсен 5-мĕш ротинчи тыткăна лекнĕ взвод командирĕ Мурешану лейтенант çапла каласа панă: «Пирĕн рота апрелĕн 13-мĕшĕнче Судак хулине çитрĕ. Унта нимĕçсемпе румынсем пуçтарăнчĕç. Нимĕçсем баржăсем çине ларма тытăнчĕç. [illegible] вырăс штурмовикĕсем вĕçсе килчĕç. [illegible] пирĕн куç умĕнех шыва путрĕç. Çакăн хыççăн портра тăракан румын салтакĕсем [illegible]

[illegible]

Каменец-Подольск облаçĕнчи Воробьевка ялĕн çыннисем фашистсем ялта тискер ĕçсем тунă çинчен акт çырнă. Актра çапла каланă: «Нимĕç салтакĕсем пирĕн яла çаратса, тустарса пĕтерчĕç. Вăрçăччен Воробьевка ялĕнче 1.500 çын пурăнатчĕ. Халĕ 100 çынтан та ытла тăрса юлмарĕ. Пирĕн ялти çынсене [illegible] гитлеровецсем вăйпа Германие [illegible] илсе кайрĕç. [illegible] персе вĕлерчĕç. [illegible] Çав çынсене масар çине хăваласа кайрĕç те унта вĕсене персе вĕлерчĕç. Хăйсен юнлă преступленийĕсене пытарас тесе, нимĕçсем çав вилĕсене бензинпа сапрĕç те çунтарса ячĕç».

Акт çине çак колхозниксем алă пуснă: Максим Кузьмич, Николай Янчук, Ольга Семенчук, Анна Семенчук тата ыт. те.

Пĕлÿ тĕрĕслевне хатĕрленеççĕ

КАЛИНИНО. Ассакассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулта пĕлÿ тĕрĕслевне хатĕрленме тытăнчĕç. Пĕлÿ тĕрĕслевне хатĕрленме ачасене валли уйрăм пÿлĕм уйăрса панă. Вĕсем кашни кунах урок-сем пĕтнĕ хыççăн çак пÿлĕме пухăнса расписани тăрăх пĕлÿ тĕрĕслевне хатĕрленеççĕ. Е. Хургинăпа З. Аникина учительницăсем час-часах, ачасем патĕнче пулса, ăнланман ыйтусене ăнлантарса параççĕ. Шкулта тата классенче тухса тăракан стена хаçачĕсем те вĕренÿ пахалăхне ÿстерме тата дисциплинăна лайăхлатма пулăшса пыраççĕ.

Т. СТЕПАНОВ.

Вĕри апат çитереççĕ

ВĂРНАР. Мăнъял Хапăсри пуçламăш шкул кăçалхи вĕренÿ çулне ăнăçлăн вĕçлессишĕн тăрăшса ĕçлет. Апрель уйăхĕнчен пуçласа кунта ачасене вĕри апат çитерме тытăнчĕç. 75 ача вĕри апат çиет. Çимелли продуктсене колхозсем параççĕ. Вĕренÿ çулĕ пĕтиччене шкулта вĕри апат пулать.

В. КИРИЛЛОВ.

Колхозлă ялăн мĕнпур вăйне çуракине ăнăçлă ирттерме мобилизацилер!

Уйхир ĕçĕсем сарăлсах пыраççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Савăçкасси ялсоветĕнчи колхозсем кĕрхи калчасене апат пама тытăнчĕç. «Индустрия» колхоз, сăмахран, виçĕ гектар çинчи кĕрхи тулă калчине апат пачĕ.

«Правда» колхоз апрелĕн 17-мĕшĕнче клевер акма тухрĕ. Малтанхи кунах вăл 10,5 гектар акрĕ. Çавăн пекех Мăн Шетмĕри «Красный пограничник» колхоз та 11 гектар клевер акрĕ. Клевер акас ĕç ытти колхозсенче те пуçланчĕ.

Анчах хăшпĕр колхозсем клевер акма тивĕçлипе хатĕрленсе çитмен. Алманчăри «12 лет Октября» колхозăн кăçал 21 гектар клевер акмалла. Анчах [illegible] вăрлăх хатĕрлемен. Çакă вăл колхоз председателĕ Васильев юлташ клевер акассине хаклаиманнинчен килет.

Клевер акмалли плана кашни колхозах пурнăçламалла.

Колхозсем çуракине кăтартуллăн ирттерессишĕн пĕтĕм вăйне хурса кĕрешеççĕ. Вăрлăх çитмен колхозсене пĕр-пĕрне пулăшаççĕ. Именкассинчи «Малалла» колхоз [illegible] Вăрлăх пахалăхĕ [illegible] Халĕ çак колхоз кÿршĕри Молотов ячĕпе тăракан колхоза 10 центнер, Шăмăршă районĕнчи колхозсене 25 центнер вăрлăх парса пулăшрĕ.

Хăшпĕр колхозсем çĕрулми яровизацилеме тытăнчĕç. Алманчăри «Родина» колхоз апрелĕн 17-мĕшĕнче 108 пăт çĕрулми яровизацилеме хучĕ.

Районри колхозсенче халĕ агитаторсен семинарĕсене ирттереççĕ. Çак кунсенче Тусай ялсоветĕнче агитаторсен семинарĕ пулса иртрĕ. Семинарта тĕнчери [illegible] çуракине вăхăтĕнче агитаторсем [illegible] докладсем туса пачĕç. [illegible]

Клевер акма тытăнчĕç

ТĂВАН, апрелĕн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). Районра уйрăм колхозсем клевер акма тытăнчĕç. «Красная Армия», «Красная Чувашия», Мичурин, Чапаев тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсем клевер акма тытăнчĕç. Пахкин [illegible] 70 гектар ытла акнă.

Ленин тата Мичурин ячĕпе тăракан колхозсем кĕрхи тулăсене [illegible] калчасене апат [illegible] Çак икĕ колхоза 25 гектар çинчи кĕрхи тулă калчине апат панă.

Уйрăм колхозсем вăрлăх [illegible] Ленин ячĕпе тăракан колхоз 350 пăт вăрлăх пухнă. Çак колхозра трактористка Л. Ермолаева юлташ 35 пăт, тракторист Е. Петров юлташ 35 пăт, колхозница К. Антонова юлташ 36 пăт панă. Çак пуçару ытти колхозсенче те сарăлса пырать.

Г. КУРАКИН.

* * *

СĔНТЕР, апрелĕн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). Уйрăм колхозсем юрăхлă вырăнсене клевер акма тытăнчĕç. Пасяс Чкалов ячĕпе тăракан колхоз 12 гектар, «Парижская Коммуна» колхоз 4 гектар çине клевер акса хăварнă.

А. СОЛОВЬЕВ.

Кок-сагыза ăнăçлăн акса хăварар

ШĂХАСАН районĕнчи колхозсем кок-сагыза вăхăтра акма тăрăшаççĕ. Кашни колхозрах акма кирлĕ хатĕрсем хатĕрленĕ, вăрлăхсене пуç çĕре те стратификацилеме пуçланă. [illegible] «Победа» колхозра (председателĕ Н. Захаров юлташ) çак ĕçе ăнăçлă тăваççĕ. Кунта кок-сагыз акма [illegible] звеносем тунă. Çак ĕçе ертсе пыракан М. Михайлова юлташ кок-сагыз вăрлăхне стратификацилеме [illegible] мĕсĕр ĕçлет. Звено членĕсем те тăрăшса ĕçлеççĕ, вĕсем хăйсен умне пысăк тухăçлă кок-сагыз туса илес задача лартнă.

Анчах хăшпĕр колхозсенче кок-сагыз акассине хатĕрленсех çитмен-ха, звено членĕсене кок-сагыз акмалли участоксене çирĕплетсе паман.

Халех кашни колхозрах кок-сагыз участокĕсене звеносене çирĕплетмелле, звено членĕ кашнин 0,3—0,5 гектарла участок çирĕплетсе памалла.

П. МИШИН.

Лашасем çуракине хатĕр мар

БУСЛАВКА. Тельман ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ В. Герасимов) кĕрешĕве малта пыракан колхозсенчен пĕри шутланса тăрать. Иртнĕ çулта вăл вăйлă тырпул туса илчĕ, ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕ.

Колхоз кăçалхи çуракине те начар мар хатĕрленнĕ. Унăн кăçал 197 гектар çурхи тыр акса хăвармалла. Акмалли вăрлăха тасатнă. Пур культурăсене те сортлама хунă. Тĕшĕ пахалăхĕ вĕсен 90—95 процентран кая мар. Агротехникăлла мероприятисене пурнăçласа [illegible]

Анчах кунта çуракине вăйĕпе ялхуçалăх машинисене çиелтен кăна çавăрса пăхни курăнать. Герасимов юлташ [illegible] çуракине 12 плуг кирлĕ, анчах та вĕсене кăçал [illegible] Вĕсен пурне те юсамалла [illegible]

Колхоз вăл [illegible] лашасем çуракине хатĕр мар [illegible] Колхоз лашисене [illegible] 57 [illegible] хурса [illegible] çуракине [illegible] Сăлтавĕ—лашасене лайăх пăхманни, не усрани чуптарнинче. Конюхсем хăйсен ĕçĕнче ответлăх туймаççĕ. Б. Осипов темиçе çул ĕнтĕ конюх пулса ĕçлет, анчах вăл колхоз правленин кăтартăвĕсене пурнăçламасть. Апла пулин те, правлени унпа килĕшсе тăрать. Виçĕ уйăх хушшинче 3 старши конюха улăштарнă. Анчах кун хыççăн та ĕç ним чухлĕ те улшăнман.

Суракн çывхарса çитрĕ. Тельман ячĕпе тăракан колхоз бригадăсенче те звеносене çĕр участокĕсем çирĕплетсе парассипе çинчен шутламаççĕ. Кунсăр пуçне, бригадирсем çуракинче кашни колхозникĕн мĕн ĕç тумаллине те палăртман.

Колхозра учет ĕçне начар туса пыраççĕ. Колхозниксем хăйсем миçе ĕçкунĕ тунине икĕ-виçĕ уйăхран çеç пĕлме пултараççĕ. Бригадирсем хăшпĕр колхозниксене ĕçкунĕ çырмасăр хăварни те пулкаланă. Анчах та колхозăн ревизи комиссийĕ (председателĕ Петров) çак фактсемпе килĕшсе тăрать.

Колхозниксем хушшинче агитациллĕ-ăнлантарулла ĕçе вăхăтран вăхăта çеç туса пыраççĕ. Ку ĕçе кирлĕ пек туса пыма пур майсем те пур. Бригадăсем çумне ялти 7 çул вĕренмелли шкулти учительсене çирĕплетнĕ пулнă. Анчах вĕсем хăйсен участокĕсенче сайра-хутра çеç пулкалаççĕ. Агитколлектив руководителĕ Е. Нянина юлташ (шкул директорĕ) ку ĕçпе сахал интересленет. Унăн шучĕпе, агитациллĕ-ăнлантарулла ĕçе колхозниксен пухăвĕсенче туса пыни те çителĕклĕ.

Асăннă çитменлĕхсем колхозри ĕçсене ăнăçлăн туса пыма чăрмантараççĕ.

Колхоз правленийĕн, çураки ирттермелли производство планĕ туса, тунă çитĕнÿсемпе лăпланмасăр, кăçал та ăнăçлă тырпул туса илессишĕн кĕрешмелле.

Ф. МАЛЫШКИН.

Ăмăртура мала тухассишĕн

ИШЛЕЙ. Тăрăн ялсоветĕнчи колхозсенче çуракине хатĕрленсе çитнине тĕрĕслерĕç. Тĕрĕслÿре ялсоветĕнчи колхозсем çуракине хатĕрленсе çитни курăнчĕ. Пĕр Калинин ячĕпе тăракан колхоз кăна кая юлса пырать. Ку колхозăн вăрлăх çитмест, лашасем начар тата ялхуçалăх машинисене юсаса çитермен. Тĕрĕслÿ итогĕсене пăхса тухсан, ялсоветĕнчи «МОПР» колхоз чи малти вырăна тухни паларчĕ. Колхоза ялсоветĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне пачĕç.

«МОПР» колхоз (председателĕ С. Боярский юлташ) çуракине пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ. Вăрлăх çителĕклĕ хывнă, ăна тасатса хунă, пахалăхне акмалли виçене çитернĕ. Пĕр урпа вăрлăхĕ кăна таса мар пулнă, ăна халь тепĕр хут тасатма тытăнчĕç. Ялхуçалăх машинисенчен икĕ касăллă 18 плуг, 20 сÿре, 4 сеялка юсанă, транспорт инвентарĕсенчен 23 урапа, 47 лаша валли 54 хăмăт т. ыт. те хатĕрлесе хунă. Колхозăн лашасене çитерме 57 центнер шусышка, 25 центнер сĕлĕ хатĕрлесе хунă. Колхоз правленийĕ çураки ĕçĕ валли ĕç планĕ туса хунă. Кашни колхозник хăй ăçта ĕçлемеллине пĕлсе тăрать.

Çураки вăхăтĕнче колхозниксем валли пĕрлешÿллĕ столовăй пулать, ун валли продуктсем хатĕрлесе хунă.

Тăрăн ялсовечĕ хăйне кÿршĕллĕ Анаткас Марка ялсовечĕпе ăмăртса ĕçлет. Колхозниксемпе колхозницăсем социализмлă ăмăртура мала тухассишĕн пĕтĕм вăйран тăрăшса ĕçлеççĕ. Юлса пыракан Калинин ячĕпе тăракан колхозăн çав малта пыракансемпе танлашмалла.

А. ПАВЛОВ.

Вăйлă махорка туса илессишĕн лайăх ĕçленĕ колхоз

УЛАТĂР. Сталин ячĕпе тăракан колхозри махорка туса илекен звено (звеновоçĕ А. Травина юлташ) кашни гектартан вăтам шутпа 31 центнер махорка пухса илнĕ. Травина, Прокопенко, Савинова, Воротилова, Кольвова юлташсем хăйсен çумне çирĕплетнĕ гектартан 76 — 87 центнера çити махорка туса илнĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çул государствăна плантан ирттерсе 280 центнер махорка панă, çавăншăн государствăран 340 центнер тĕш тырă илнĕ.

МТС-ри комсомолецсем çураки умĕн

ЕЛЧĔК. Иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче пирĕн МТС-ра 21 комсомолец тракторист пулнă, 4 комсомолец бригадирсен помощникĕсем, 12 комсомолец плугарьсем пулса ĕçлерĕç. Вĕсем 3.360 гектар сухалас вырăнне 4.013 гектар сухаланă. 1.716 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Çавăнпа пĕрлех вĕсем тракторпсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса янă. Хĕрарăмсен 6-мĕш трактор бригади социализмлă ăмăртăва хутшăнса çулталăк планне 150 процент тултарчĕ, 40 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ.

Иртнĕ çулта горючи перекетлесе тĕслĕх комсомолецсем [illegible] 14 тонна горючи перекетлесе хăварнă.

Кăçалхи çуракине иртнĕ çулхинчен те лайăхрах ирттерес тесе, комсомолăн пуçламăш организацийĕ чылай ĕçсем турĕ. Комсомолецсенчен виçĕ ремонтнăй бригада организацилерĕ. Вĕсем тракторсене юсас ĕçре [illegible] колхозсене те пысăк пулăшу пачĕç.

[illegible]

Тракторсем хушшинче политпĕлÿллĕ-массăллă ĕçе тивĕçлипе туса пырас шутпа 16 комсомолецна агитатор пулма, 17 комсомолецна—бригадăсенче стена хаçачĕсене кăларма редакторсем пулма [illegible] Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй асăлă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине вĕренес тĕлĕшпе кружок ĕçлет. Занятисем план тăрăх, эрнере пĕрре пулса иртеççĕ.

Кадрсем хатĕрлес ĕçре те пуçламăш организаци МТ Станцие чылай пулăшрĕ. Кăçал çĕнĕрен 50 çынна трактористсем пулма вĕрентсе кăларнă. Халĕ комбайнерсен помощникĕсене пулма 50 çын вĕренеççĕ. [illegible] МТС çумĕнче ятарласа курс [illegible] Унта 60 çын вĕренеççĕ.

Пирĕн машинно-тракторнăй станци иртнĕ çулта çурхи тата кĕркунехи ремонт ĕçĕсене срокчен вĕçлерĕ. Кăçал ялхуçалăх ĕçĕсене те çавăн пекех [illegible]

ДИМИТРИЕВА.

ВЛКСМ пуçламăш организаци секретарĕ.

Çуракине организациленĕ пуçăнар

КАЛИНИНО, апрелĕн 18-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсенче вăрлăхсем çителĕклĕ, вĕсене тасатнă, шăтасла́х пахалăхне сăнанă. 2.300 центнер вăрлăх пăрçана пĕтĕмпех алăпа суйласа тасатнă. Уйрăм колхозсенче хăшпĕр вăрлăхсем çитменнине кура, колхозсем пĕр-пĕрин хушшинче улăштарассине тата колхозниксенчен кивçен пухассине организацилерĕмĕр. «Победа» колхоза «Социализм» тата «Коминтерн» колхозсем 10-шар центнер вăрлăх пачĕç. «Молния» колхоза Мичурин ячĕпе тăракан колхоз вăрлăх пачĕ.

Ку ĕç районри ытти колхозсенче те ăнăçлăн вĕçленчĕ. Колхозсен вăрлăхлăх фондне хăйсен тыррисенчен вăрлăхлăх кивçен тырă парас ĕçе 400 колхозник ытла хутшăнчĕ. Шăрачкав районĕ валли 265 центнер вăрлăх пухса патăмăр.

Лашасене çураки тĕлне пĕтĕмпех хатĕрлесе çитерне. «Çуталла» колхозра вăйсăр лашасем чылайччĕ. Юлашки вăхăтра вĕсене кантарма тата лайăх апат çине тăратнине пула вĕсем халĕ пурте ĕçе юрăхлă. Çак колхозрах ут таврашĕсем çителĕксĕрччĕ, пуррисем ытла та япăхчĕ. Халĕ çак колхоз 30 комплект ут таврашĕсене çĕнĕрен туянчĕ. Çапла вара юлса пыракан колхоз та ака ĕçне пуçăнма пур енчен те хатĕрленсе çитрĕ.

Кашни колхозрах çĕр писсе çитсе, акма ĕлкĕрмине сăнаса тăма опытлă, ватă колхозниксене уйăрнă. Вĕсем кашни кунах уйхирсенче пулаççĕ. Уйрăм колхозсенче кĕр калчисене апатлама тытăнчĕç. «Броневик» колхоз—40 гектар, «Çуталла»—50 гектар, «Новая жизнь»—25 гектар, «Трактор»—10 гектар, «Партизан»—12 гектар çинче кĕр калчисене апатлантарнă. Çак паха ĕç районри ытти колхозсенче те сарăлсах пырать.

Çураки вăхăтĕнче колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе тума [illegible] стена хаçачĕсемпе «Боевой листоксем» кăларма 390 çын уйăрнă. Вĕсем халĕ ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн «1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планĕ çинчен» йышăннă постановленине колхозри бригадăсемпе звеносенче тĕплĕн ăнлантараççĕ.

Сăмахран, «Броневик» колхозра 9 çынна хаçатсем вулама тата политинформацисем ирттерме уйăрнă. Вĕсенчен О. Сорокина, Н. Спиридонов, Петров тата ытти юлташсем те политикăллă-ăнлантарулла ĕçе ăнăçлăн туса пыраççĕ.

Ф. РОМАНОВ,

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Ют çĕршывсенче

Эрколи калани

ЛОНДОН, апрелĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Неапольтен çапла пĕлтерет: Италири коммунистсен партийĕн лидерĕ Пальмиро Тольятти (Эрколи) Рейтер агентствин корреспонденчĕне Спригга апрелĕн 18-мĕшĕнче çапла каланă: «Италин çакна манма юрамасть: фашистсем ытти халăхсене тапăнса сиен тунине Италин саплаштармалла. Çирĕп те тĕрĕслĕхлĕ мир тăвас тесен, Итали халăхĕн ытти ирĕклĕ те никама пăхăнман халăхсене тапăнас шухăша ĕмĕрлĕхех пăрахас пулать».

Корреспондент çапла ыйтнă: Италири коммунистсен наци политики пĕтĕм тĕнчери коммунистсен политикипе мĕнле çыхăнса тăрать?—тенĕ. Тольятти çапла каланă: «Кам та кам Совет Союзне вăл мĕнле те пулин çĕршыва пăхăнтарма тăрăшать тесе айăплать — çав Совет Союзĕн политикине пĕртте ăнланман, вăл фашистсен элекле пропагандин танатине лекнĕ», тенĕ.

Профсоюзсен движенийĕ çинчен тата Италири рабочисен тĕллевĕ çинчен Тольятти çапла каланă: «Англири рабочисем гитлерла Германие çĕнтерес тесе тăрăшни пире питĕ савăнтарать. Италири рабочи класс хăйĕн çĕршывне захватчиксенчен ирĕке кăлармашкăн союзниксене ытларах пулăштăр тесе эпир пĕтĕм вăйпа тăрăшăпăр. Халăх пирĕн политикăллă утăма çав тери хавасланса ырларĕ. Эпир халăх вăрçăшăн та мар, ăна хирĕç те мар текен шухăша сарса ярас тесе тăрăшрăмăр. Пирĕн канашпа йышăнса демократиллĕ çар правительстви тусассăн, Итали часах Германие хирĕç пыракан вăрçăра союзниксене пуймай пулăшма пултарĕ, çакă вăл пуринчен те паха».

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, пур фронтсенче те патрульсем çапăçнă тата артиллери персе тăнă.

Авиаци Италин тăшман йышăнса тăракан территорийĕ çинчи чугун çулсемпе кĕперсене тапăннă.

Йывăр тата вăтам бомбардировщиксем ĕнерхи çĕр Пловдив хулинчи (Болгари) сортировка станцине тапăннă.

Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 26 самолетне пĕтерсе тăкнă.

ЛОНДОН, апрелĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: пур фронтсенче те патрульсем çапăçнă тата артиллери персе тăнă.

Çанталăк начар пулнипе лайăх курăнман пирки, самолетсем вĕçсе кайса тăшман объекчĕсене тапăнни пулман.

АНГЛИРЕ ЮТ ÇĔРШЫВ ПРЕДСТАВИТЕЛЬСТВИСЕН ЮТ ÇĔРШЫВСЕМПЕ ДИПЛОМАТИЛЛĔ МАЙПА ÇЫХĂНСА ТĂРАС ПРАВИНЕ ЧАКАРНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви çакăн пек пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă:

Англи правительстви Англири мĕнпур дипломатиллĕ представительствăсен пуçлăхĕсене çакăн çинчен пĕлтернĕ: апрелĕн 17-мĕшĕнчен пуçласа, малашне уйрăм пĕлтеричченех, Англири дипломатиллĕ представительствăсене малтан цензура пăхса тухмасăр нимĕнле телеграмма та, нимĕнле çыру та яма та, илме те чарнă.

Çавăн пекех тата дипломатиллĕ представительсене Англирен тухса кайма чарнă.

Англи правительствин, — тенĕ çав пĕлтерÿре, — çак халиччен никам йышăнман мерăсене халиччен пулман условисенче йышăнма тивĕ, çав условисем вĕсем кăçал тумалли вăрçă ĕçĕсене пула сиксе тухрĕç, — тенĕ.

Рейтер агентстви çапла калать: илнĕ хыпарсем тăрăх, çак тĕлĕшпе США-н, Совет Союзĕн тата Британи доминионĕсен (эйресĕр пуçне) представительствисен прависене çеç чакарман.

Агентство каланă тăрăх, Англи çак тĕлĕшпе малтан США-па тата Совет Союзĕпе канашланă.

АМЕРИКА ШВЕЦИЕ ЯНĂ НОТА

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). «Чикаго сэн» хаçатăн Лондонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн Швецие янă нотинче çакна кăтартса панă: çитес виçĕ уйăх хушшинче Швецин Германие шарикоподшипниксем тăратма пăрахмалла, тенĕ. Нотăра çапла каланă: халĕхи вăхăтра Германин ĕçĕ оккупациленĕ Европăран материалсем тăратнинчен ытларах та ытларах килет. Шарикоподшипниксем Германи авиацийĕшĕн питĕ паха. Çав авиаципе кĕрешсе американецсен куллен темиçе çын вилет, тенĕ. Çапла пĕлтереççĕ: Пĕрлешÿллĕ Штатсем Швецие кирлĕ паха материалсем тăратма, çавăн пекех тата швеци промышленникĕсене Германие таварсем тăратма пăрахнипе тата нацистсем шведсене хирĕç мерăсем йышăннипе тÿсекен сиене саплама пулĕ. Юлашкинчен нотăра çапла каланă: Швеци çак требованисене йышăнмасан, Пĕрлешÿллĕ штатсен вара кирлĕ мерăсем йышăнмалла пулать, тенĕ.

Англи правительстви Америка нотин çумне хутшăннă.

ГЕРМАНИН АНКАРАРИ ПОСОЛЬСТВИН СОТРУДНИЦИ ТАРНĂ

ЛОНДОН, апрелĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Германин Будапештри генеральнăй консулĕн Каппăн хĕрĕ, Анкара хулинче Германи посольствинче ĕçлекенскер, тарнă. Вăл Людвиг Мойзеш патĕнче ĕçлесе пурăннă. Анкарара пурте çапла шутлаççĕ: Мойзеш Турцире пурăнакан гестаповецсен пуçлăхĕ тата Гитлер представителĕ пулса тăрать, теççĕ. Нимĕçсем çав тарнă хĕре тупасшăн темĕн пекех тăрăшаççĕ. Анчах та вăл ăçтине пĕлмеççĕ.

Нимĕçсен Анкарари колонийĕ çавăн пекех тата ак мĕн пирки хыпса ÿкнĕ: Турцире тăватă нимĕç летчикне тытса чарнă. Вĕсен Германие таврăнмалла пулнă. Анчах та вĕсенчен иккĕшĕ Германие таврăнма килĕшмен, союзниксем енне куçнă. Çав икĕ летчик Турцирен Кипрана пынă. Халĕ вĕсем Сирие тухса кайнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, американецсен авиацийĕ ĕнер кăнтăрла Па-де-Кале районĕнчи çар сооруженийĕсене тапăннă.

Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи базăсенчен вĕçсе тухнă союзниксен самолечĕсем ĕнер нимĕçсен Эгей тинĕсĕнчи тата Грецин кăнтăр çыранĕсем патĕнчи суднисене тата Эгей тинĕсĕнчи гаванне тапăннă. Тăшманăн пĕр суднине шыва путарнă, тепĕр суднине вăйлă сиенленĕ.

Апрелĕн 18-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен «Москито» йышши бомбардировщикĕсем Кельн хулинчи тĕрлĕ объектсене тапăннă.

ЛОНДОН, апрелĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» йышши бомбардировщиксен питех те пысăк соединенийĕсем Германи территорийĕнчи объектсене, вăл шутра Берлин хулинчи çар объекчĕсене те, тапăннă.

ЛОНДОН, апрелĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Официально çапла пĕлтереççĕ: апрелĕн 19-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тăшман объекчĕсене тапăнма акăлчансен пĕр пин самолет ытла вĕçсе кайнă. Вĕсен пысăк пайĕ Францири чугун çул объекчĕсене атакăланă. Париж, Руан тата Тернье хулисем çывăхĕнчи чугун çул станцийĕсемпе ремонт цехĕсене вăйлă тапăннă. «Москито» йышши бомбардировщиксем Берлина тата Хĕвеланăç Германири ытти объектсене тапăннă.

Америкăнецсен Европăри хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: паян Америка бомбардировщикĕсен питех те пысăк соединенийĕсем Кассель хулине тата Гаммран хĕвелтухăçнерехри районне тапăннă.

ГЕРМАНИ АВИАЦИЙĔ ЛОНДОНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, апрелĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: апрелĕн 18-мĕшĕнче каçхине Лондон районĕнче пĕр вăхăтлăха сывлăшри хăрушлăх çинчен пĕлтернĕ. Тăшман самолечĕсем хулари темиçе район çине, çавăн пекех тата центрти графствăсем çине бомбăсем пăрахнă. Фугаслă бомбăсем çурăлса кайнипе Лондон районĕнче çынсем вилни тата аманни пулнă.

«ФРАНКИСТСЕН ИСПАНИЙĔ — ГЕРМАНИЕ ТАВАР ТĂРАТАКАН БАЗА»

Англи бюллетенĕ Франко Германие пулăшса тăни çинчен çырни

ЛОНДОН, апрелĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). «Спэниш ньюс Леттер» ятлă бюллетень çапла çырать: франкистсен Испанийĕ 1939 çултанпах Германие тавар тăратакан база пулса тăрать. Çав çулхи çулларанпах Франко оккупациленĕ территорирен тимĕр руди, пăхăр тата Испанире пуймай кăларса тăракан ытти стратеги тĕлĕшпе кирлĕ материалсем те Германие кайса тăнă. Португали Испание çар промышленносĕ валли чĕртавар ярса тăрать. Кунта çав чĕртавартан вăрçă хатĕрĕсем тăваççĕ те Гитлер патне ярса тăраççĕ. Берлинра çапла пĕрре кăна мар палăртса каланă: Испани сутса тăракан япаласене илекенсĕрччен чи лайăххи — Германи пулса тăрать, тенĕ.

Бюллетень малалла çакна кăтартса çырать: Франко тĕрĕслесе тăракан Испани промышленносĕнче нимĕç техникĕсем пуймай ĕçлеççĕ. Çав техниксене унта Испани интересĕсемшĕн ĕçлеççĕ тесе никам та ĕненме пултараймасть ĕнтĕ. Юлашки хыпарсем тăрăх, гитлеровецсем Испание ятарласа хатĕрленĕ тĕпчев лабораторийĕсем куçараççĕ, мĕншĕн тесен çав лабораторисене Германире тытса, вĕсене акăлчансемпе американецсен авиацийĕ бомбăсем пăрахса сиенлеме пултарать.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Ялхуçалăх банкĕн Чăваш конторине çакăн пек работниксем кирлĕ: конторăра ĕçлеме—финансировани инспекторĕ, колхозсем тĕлĕшпе ĕçлекен инспектор, бухгалтер; ялхуçалăх банкĕн уполномоченнăйĕсен районсенчи пункчĕсенче ĕçлеме—уполномоченнăйсем тата инспекторсем.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, здание Госбанка, Контора сельхозбанка.

2—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ. 00595 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.